Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

133 (9426) № ✵ 2007 çулхи ноябрĕн (чӳк уйăхĕн) 21-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

**Уяв**

## РЕСПУБЛИКА ЕРТӲÇИ ТИВĔÇЛИПЕ ХАКЛАРĔ

***"Чи-чи – Шупашкар район çынни вăл – эпĕ", – шӳтлесе те чăнласа пуçларĕ хăйĕн сăмахне районăн 80 çулхи уявне хутшăннă, унта сăмах каланă республика ертӳçи Н.В.Федоров. Унăн сăмахĕсене хаçатра туллин пичетлеме палăртатпăр. Тăван районăмăр çуралнă кунне уявлама Чăваш Ен ертӳçи хăй пыни епле паха та, унтан та ытларах, халь кăна каланă сăмахсене илтме пушшех те кăмăллă пулчĕ унта ларакан Шупашкар район çыннисемшĕн.***

"Эп сăмах хăватне ĕненетĕп", – тесе çырнă тăван халăхăмăрăн паллă классикĕ Петĕр Хусанкай. Федоров Президент сăмахĕсем, район пирки вăл палăртса каланисем, чăннипех те, район ертӳçисемшĕн çеç мар, унăн çыннисемшĕн те хаклă.

Районăн 80 çуллăхне халалланă савăнăçлă пуху ноябрĕн 17-мĕшĕнче, шăмат кун, шурă Шупашкарăмăрта, оперăпа балет театрĕнче, иртрĕ. Зал тулли халăх пуçтарăнчĕ унта. Тĕрлĕ çĕрте ĕçлекенсем килнĕ: промышленноçра тата ял хуçалăхĕнче, вĕрентӳ тата медицина отраслĕсенче тăрăшакансем, тата, паллах, хисеплĕ ветерансем.




*«Приволжское» учхозри В.А.Николаевана Н.В.Федоров Президентпа район ертӳçи А.П.Князев Хисеп грамотипе чыслаççĕ.*




*Сцена çинче – юрă-ташă ăстисем.*

Юрă-ташă ăстисем уява уçнă хыççăн программăна ертсе пыракансем район ертӳçине А.П.Князева тата республика пуçлăхне Н.В.Федорова сцена çине чĕнчĕç. Района инвестици хывасси юлашки çулсенче 5 хут ӳснине палăртрĕ республика ертӳçи. "Ку вăл районăн хăватлă экономика базине, унсăр пуçне тата лайăх пуласлăха пĕлтерет", – терĕ ун пирки Н.В.Федоров. Район аталанăвне палăртса та хакласа каларĕ. Пĕлтĕр района республика хыснинчен 627 миллион тенкĕ уйăрнă пулсан, кăçал çул тума çеç – çур миллиарда яхăн.

Пирĕн район центрĕнче чаплă физкультурăпа сывлăх комплексĕ çĕклесе лартнине пĕлетпĕр. Анчах республика ертӳçи ун пеккисене районта тата тăвассине пĕлтерчĕ. "Эсир хирĕç пулмасан, паллах", – хушса хучĕ вăл шӳтлесерех. Ку сăмах хыççăн халăх хирĕç маррине пĕлтерсе те, савăнса та пуль тăвăллăн алă çупса ячĕ.

Унтан Президент вăл е ку енпе палăрнисене чысларĕ. Шупашкар район тĕп больницин пай заведующийĕ А.А.Доронин "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ" хисеплĕ ята тивĕçрĕ, "Чăваш бройлерĕ" АУОри инкубаци цехĕн заведующийĕ Л.В.Савельева "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ зоотехникĕ" пулса тăчĕ, Кӳкеçри 1-мĕш шкул учителĕ Н.А. Востриков – "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ". Кунсăр пуçне Тав хучĕпе Президент районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председательне И.П.Павлова чысларĕ. "Манăн колхоз председателĕ", – терĕ Иван Павлович пирки республика ертӳçи. И.П.Павлова районти социаллă хӳтлĕх пайне ертсе пыни тăрăх пĕлет-тĕр чылайăшĕ, анчах Иван Павлович ял хуçалăх предприятийĕн пуçлăхĕн лавне те чылай çул туртнă.

Район ертӳçи хăйĕн сăмахĕнче тăван енĕмĕрĕн пилĕк çулхи аталанăвне тишкерчĕ. Çак вăхăтра вăл аталанса та тĕреклене çеç пынă. Районта тытса пыракан политикăна тата республикăпа çĕршыв хăйсен умне лартнă задачăсене пурнăçласа пыраççĕ кунта. Пур енлĕн аталанать районăмăр. Кашни ял патне çул çитерессипе çыхăннă республикăри программăпа хĕрӳ ĕç пырать. Промышленность тата ял хуçалăх предприятийĕсем шав малалла талпăнаççĕ.

Наградăсем самай пулчĕç уявра (ун пирки – «Саламлатпăр!» информаци). Производствăра малта пыракансене çеç мар, района хăй вăхăтĕнче ертсе пынисене те чыс турĕç.

Ăшă сăмах каласа ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ В.П.Мидуков, ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертӳçи А.С.Иванов тата ыттисем савăнтарчĕç. Ытти хаклă хăнасем те ырă сунчĕç. Савăнăçлă пухăвăн официаллă пайне юрă-ташă ăстисем илем кӳчĕç. Антракт хыççăнхи концертра та халăх кăмăлтан йышăнчĕ.

В.ЭВЕРККИ.

## УЯВПА КĂМĂЛЛĂ

***Ноябрĕн 17-мĕшĕнче район хăйĕн 80 çуллăхне палăртрĕ. Унта тĕрлĕ çĕрте ĕçлекенсем хутшăнчĕç. Мĕнлерех йышăнчĕç-ха вĕсем уява?***

***А.С.ИВАНОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертӳçи:***

– Уяв питĕ лайăх иртрĕ. Пĕрремĕшĕнчен, тĕплĕн хатĕрленнĕ май районта малтан ĕçленисене те манман. Вĕсене чĕннĕ çеç те мар, палăртса та хăварчĕç. Иккĕмĕшĕнчен, район лайăх шайра ĕçлесе пынине, кунта инвестицисем нумай килнине палăртма кăмăллă. Виççĕмĕшĕнчен, район пĕр шухăшлăн аталанать. Производство енчен-и, социаллă пурнăç тĕлĕшпе-и – пур çĕрте те ăнланулăх сисĕнет.

***А.Н.НИКАНОРОВ, «Смак-Гурмэ» тулли мар яваплă обществăн гендиректорĕ:***

– Шупашкар районĕн çуралнă кунне халалланă уявра эпĕ пĕрремĕш хут, мĕншĕн тесен Шĕнерпуçĕнче сысна комплексĕ çĕкличчен кунта ĕçлемен. Уяв питĕ килĕшрĕ. Ку вăл малалла ăнтăлма-талпăнма хавхалантарать. Районта влаç – бизнес – çынсем çыхăну пурри, çавсем пĕр-пĕринпе ăнланса ĕçлени палăрать.

***Ю.С.ЕФИРКИН, «Чăваш Енĕн ортопедипе протез предприятийĕ» ФПУП директорĕ, Ишек ялĕнче çуралса ӳснĕскер:***

– Питĕ килĕшрĕ. Уяв ячĕпе йĕркеленĕ савăнăçлă пухăва чĕнме никама та манман. Хăй вăхăтĕнче ĕçленĕ ертӳçĕсене те, ветерансене те хисеп тунă. Ку вăл питĕ лайăх.

***И.П.ПАВЛОВ, районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ:***

– Лайăх хатĕрлесе лайăх ирттерчĕç. Уява республика Президенчĕ Н.В.Федоров хăй хутшăнни, паллă кунпа саламлани район çыннисемшĕн пысăк чыс. Уншăн хĕпĕртемелле, малалла та тăрăшса ĕçлемелле.

***Ф.И.КИРИЛЛОВА тыл тата ĕç ветеранĕ, Е.И.ИВАНОВА ĕç ветеранĕ, иккĕшĕ те хăй вăхăтĕнче «Пучах» колхозра ĕçленĕ:***

– Уява епле йĕркеленипе эпир питĕ кăмăллă. Ветерансене манманни пушшех те аван.

Уяврисен шухăш-кăмăлĕпе В.ТИТОВА кăсăкланнă.

— Ноябрĕн 21-мĕшĕ – Налук службинче ĕçлекенсен кунĕ —

### НАЛУК СЛУЖБИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

***Сире професси уявĕпе – Раççей Федерацийĕн налук органĕсенче ĕçлекенсен кунĕпе – саламлатăп!***

***Бюджета тултарас енĕпе ĕçлесси – питĕ пĕлтерĕшлĕ те яваплă, çавăнтан экономикăн лайăх аталанăвĕ, Чăваш Енпе Раççейре пурăнакансен пурнăç шайĕпе пахалăхĕ килет. Сирĕн ĕçĕрĕн тĕп кăтартăвĕнчен пĕри – хысна тупăшне пĕрмай ӳстерсе пыни. Кăçалхи тăхăр уйăхра пур шайри хыснана та пĕлтĕрхи танлаштаруллă тапхăртинчен нумайрах налук пухăннине палăртма кăмăллă.***

***Республикăн инвестицилле илĕртӳлĕхне ӳстерессипе эпир пурте пĕрле çине тăрса ĕçленине, промышленность хăватне самай ӳстернине, налук тĕлĕшпе ĕç-хĕле çултан çул ăслă-тăнлă тытса пынине кура Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ бюджечĕн тупăш пайĕ ӳссех пырать, кăçал вăл виçĕ хут ӳсрĕ, историлле максимума – 30 миллиард тенке – çитрĕ.***

***Лайăх ĕçĕршĕн тата тивĕçĕре чунтан пурнăçланишĕн тав тăватăп. Налук службин мĕнпур ĕçченне Чăваш Ен ырлăхĕшĕн ăнăçлă тăрăшма сунатăп, çирĕп сывлăх, çемьере ăнăçупа телей пултăр!***

Н.ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

### НАЛУК ОРГАНĔСЕНЧЕ ВĂЙ ХУРАКАН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНСЕМ!

***Сире професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп.***

***Сирĕн çинче пысăк ĕç – тĕрлĕ налуксемпе тӳлевсем вăхăтра пухасси тата налук саккунĕсене пăхăнса тăнине тĕрĕслесси.***

***Сирĕн пултарулăхпа тăрăшулăхран район пуянлăхĕ нумай килет. Палăртма кăмăллă, юлашки çулсенче районта налук пухас, вырăнти халăха налук саккунĕсемпе тата çĕнĕлĕхсемпе паллаштарас ĕççем лайăхланчĕç. Çакă ентешĕмĕрсен социаллă пурнăçне, районăн экономикине аталантарма çул уçса пырать.***

***Кулленхи ĕçре тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тав тăватăп.***

***Пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ, кашни çемьене иксĕлми телей сунатăп.***

А.КНЯЗЕВ,
Шупашкар районĕн пуçлăхĕ.

## С А Л А М Л А Т П Ă Р!

Чăваш Республикин Президенчĕн 2007 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн "Шупашкар районĕн тĕп больници" сывлăха сыхлас енĕпе ĕçлекен муниципаллă учрежденийĕн пай заведующине, ***А.А.ДОРОНИНА "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ"*** хисеплĕ ят; çавăн пекех "Чăваш бройлерĕ" АУОн инкубаци цехĕн заведующине, ***Л.В.САВЕЛЬЕВАНА – "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ зоотехникĕ";*** Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан 1-мĕш номерлĕ шкул учительне – ***Н.А.ВОСТРИКОВА "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ"*** хисеплĕ ятсем панă.

Вĕсене пурне те район 80 çул тултарнă ятпа йĕркеленĕ уявра Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров хăй саламларĕ. Николай Васильевич çак кун районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен районти канашĕн председательне ***И.П.ПАВЛОВА*** та сцена çине тухма ыйтрĕ. "Эпĕ пĕчĕк чухне пирĕн яла вăл УАЗикпе килетчĕ. Ял халăхне çĕр ĕçне тухма чĕнсе каланине манман-ха. Паян та вăл пĕр вырăнта ларма пĕлмест, май килнĕ таран пулăшать", – тесе Чăваш Ен ертӳçи Иван Павловича обществăлла ĕç-хĕле активлă хутшăннăшăн, ветерансен юхăмне аталантарассипе нумай ĕçленĕшĕн ***Чăваш Республикин Президенчĕн Тав çырăвне*** тыттарчĕ.

**(Пуçламăшĕ. Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.)**

**ДЕКАБРĔН 2-МĔШĔЧЧЕН – 11 КУН ЮЛЧĔ**

**Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх**

***Юн кун, ноябрĕн 21-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **-5**, çĕрле **–9**

***Кĕçнерни кун, ноябрĕн 22-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **-8**, çĕрле **–12**

***Эрне кун, ноябрĕн 23-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юрпа çумăр çăвать, кăнтăрла **-4**, çĕрле **–4**

***Шăмат кун, ноябрĕн 24-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **0**, çĕрле **–2**

**Паян - РФ Налук службинче ĕçлекенсен кунĕ**

# НАЛУКÇĂСЕН ĔÇĔ КИЧЕМ МАР

***Паян, ноябрĕн 21-мĕшĕнче, налукçăсем хăйсен професси уявне палăртаççĕ. РФ Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн шăпах çак кун, 1991 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче, çĕршывра налукçăсен уйрăм службине туса хунă. Уяв умĕн эпир Федераллă налук службин республикăри управленийĕн районсем хушшинчи 5-мĕш инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕпе Н.Ф.ДЕМИДОВАПА тĕл пултăмăр, хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа пама ыйтрăмăр.***

***– Надежда Фадеевна, налукçăсен ĕçĕ кичем мар-и? Вĕçĕм çĕр тĕрлĕ цифра. Пуç ыратакан пулсах çитет пуль?***

– Инспекцире ĕçлекенсем хăйсен ĕçне кăмăлласа пурнăçлаççĕ. Паянхи кун пирĕн йышăмăр 70 çынпа танлашать. Вĕсенчен 11-шĕ 1990 çултанпах ылмашмасăр ĕçлет. Инспекцире тăрăшакансен вăтам çулĕ 35-пе танлашать. Пирĕн йышра чылайăшĕ – хĕрарăмсем.

Кăçалхи вунă уйăхра эпир Шупашкар районĕнче тĕрлĕ шайри хыснана 269379 пин тенкĕ налук пуçтартăмăр. Пĕлтĕрхи январь-октябрь уйăхĕсемпе танлаштарсан, çакă 128,8 процент пулать. Пухнă укçаран 64952 пинĕ федераллă хыснана кайнă, 103613 пинĕ – республикăна, 100814 пинĕ – района.

***– Хыснана килекен тупăран хăш налукпа нумайрах пуçтаратăр?***

– Кăçалхи вунă уйăхра пухнă мĕнпур налукран 48,2 проценчĕ – уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук. Хушма хакран илекенни – 21,5 процент, ятарлă режимсем усă курнипе тӳлекен налук мĕнпур налукăн 9 процентне йышăнать, пурлăх налукĕ – 8,9 процент, тупăш налукĕ – 6,6 процент.

***– Надежда Фадеевна, пĕр калаçура эсир хальхи вăхăтра уйрăм предпринимательсемпе предприяти-организацисем йышлине палăртнăччĕ...***

– Шупашкар районĕнче паян – 870 организаципе 1514 уйрăм предприниматель. Кăçалхи вунă уйăхра 85 организацие учета тăратнă, 4-шне шутран кăларнă. Çак вăхăтра 460 уйрăм предпринимателе шута илнĕ, 244-шне шутран кăларнă, тепĕр майлă каласан уйрăм çынсенчен нумайăшĕ предпринимательствăпа юридици сăпачĕллĕ регистрациленмесĕр ĕçлеме шут тытрĕ.

***– Налука пытарас текенсем тупăнмаççĕ-и?***

– Пирĕн инспекторсем




***Налук тӳлекенсемпе тата регистрацие учет енĕпе ĕçлекен тĕп патшалăх налук инспекторĕ В.Я.Емельянова черетлĕ клиентпа.***

хăйсем тĕллĕн те, правăна сыхлас енĕпе ĕçлекенсемпе çыхăну тытса та тĕрĕслев ирттерееççĕ. Эрех тавраш сутакансене тĕрĕслессипе час-часах тухса çӳренĕ, контрольпе касса аппарачĕпе епле усă курнине тĕрĕсленĕ. Çав вăхăтра 1136 пин тенкĕлĕх штраф хунă.

Налуксемпе сборсем çинчен калакан законодательствăна пăхăннине тĕрĕсленĕ май 40008 пин тенкĕ хушма тӳлев шыраса илнĕ. Тĕрĕслевсен кăтартăвĕ çула тухиччен лайăх тишкернинчен те нумай килет, шăпах çав енĕпе çине тăраççĕ те инспекцире.

Уяв ячĕпе эпĕ хамăр ĕçченсене тата налук тӳлекенсене саламлатăп, пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçупа телей сунатăп.

В.ЭВЕРККИ калаçнă.

## САЛАМЛАТПĂР!

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.)**

Çавăн пекех Президент аллинчен ***ялта пурăнакансене патшалăх енчен çурт-йĕр хăпартма пулăшу паракан свидетельствăна*** Çĕнĕ Тренккассинче пурăнакан **КИРИЛЛОВСЕН** ***çемйи*** илме тивĕçлĕ пулчĕ. ***Çамрăк çемьесене е çамрăк специалистсене патшалăх енчен ялта çурт çавăрма е туянма пулăшу паракан свидетельствăна*** Çĕнĕ Тренккассинчи культура çурчĕн директорне ***В.А.ГРАЦИАНОВАНА,*** "Пучах" ял хуçалăх предприятийĕнче тракторист пулса ĕçлекен ***А.Г.ТИМОФЕЕВА*** пачĕç. Ăратлă ĕçпе ĕçлекен "Чувашское" АУО зоотехникĕ ***Е.М.АБНОСОВА,*** кунтанах азот турттаракан машинăпа ĕçлекен ***Р.И.БОРИСОВ,*** "Приволжское" сăнавпа вĕрентӳ хуçалăхĕн операторĕ ***В.А. НИКОЛАЕВА,*** "Атлашевский" ял хуçалăх кооперативĕн тракторист-машинисчĕ ***Н.П.ТЕРЕНТЬЕВ Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине*** пулчĕç. ***Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине "Чăваш Республикинчи хĕрарăмсен канашĕ" обществăлла организацин районти уйрăмне*** пачĕç.

***Шупашкар районĕн юбилейлĕ Хисеп грамоти*** те çак кун нумай пулчĕ. Ăна районăн социаллă экономика аталанăвĕшĕн нумай тăрăшнăшăн ***"Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕ" ООО,*** "АПК аталанăвĕ" приоритетлă наци проектне ăнăçлă пурнăçа кĕртнĕшĕн тата ял хуçалăх производствине лайăх тытса пынăшăн ***"Ленин ячĕллĕ колхоз" ял хуçалăх производство кооперативĕ,*** пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх отраслĕне аталантарма тăрăшнăшăн ***"Теплоэнергосети" АУО,*** потребительсен кооперацине аталантарассипе ĕçленĕшĕн ***Кӳкеçри райпо,*** "Вĕрентӳ" наци приоритетлă наци проектне ăнăçлă пурнăçа кĕртнĕшĕн ***"Тренккассинчи художествăпа эстетика предмечĕсене тата спорт профильне тарăннăн вĕрентекен пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкул" МВУ,*** Шупашкар район историне сыхласа хăварассишĕн тата аталантарассишĕн лайăх ĕçленĕшĕн ***"Бичурин тата паянхи самана" Шупашкар районĕнчи музей" МКУ,*** районти обществăлла пурнăçа активлă хутшăннăшăн тата ветерансен юхăмне аталантарассипе нумай тăрăшнăшăн ***Кӳкеç поселокĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕсен обществăлла организацийĕ*** илчĕ.

Уявра районти чи хисеплĕ çынсенчен пĕрисене (ун пирки хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ) ***«Районăн хисеплĕ гражданинĕ»*** ят панипе саламларĕç. Ку чыса, аса илтерер, Апаш ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи ***В.И.Смородинов,*** Мерешпуçĕнчи ***Ю.К.Кириллов*** таврапĕлӳçĕ тата районти санитарипе эпидемиологи станцийĕн тĕп врачĕ пулнă ***В.С.Юрьев*** (вăл пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ) тивĕçрĕç.

Район 80 çул тултарнă ятпа маларах тĕрлĕ конкурс иртрĕ. Çĕнтерӳçĕсене вара пĕтĕм халăх умĕнче сцена çинче наградăларĕç. "Манăн ял тăрăхĕ" районти конкурсра ***Çĕньял тăрăхне*** ситекенни пулман. Вĕренекенсем активлă хутшăнни те савăнтарать. Сочиненисен конкурсĕнче виçĕ номинаципе те çĕнтерӳçĕсем пулчĕç. Акă, Çатра-Хочехмат шкулĕнчи ***Екатерина Мамутина*** "Хăйĕн ялĕ çинчен çырнă чи лайăх калав" номинацире палăрчĕ. Ишлейри ***Антон Зорин*** "Район – персонаж биографийĕ тата пулăм урлă" номинацире пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Тренккассинчи ***Людмила Фомина*** хăйĕн ял тăрăхĕ çинчен чи лайăх калав çырнă. Мăналти ***Эльвира Ротманова*** вара фото ӳкерчĕксем тума юратать. Вăл "Район тата çынсем" конкурсра "Тăван тавралăх" номинацире çĕнтерӳçĕ пулчĕ. Вĕсене пурне те уявра район пуçлăхĕ А.Князев Дипломсемпе парнесем тыттарчĕ.

А.СУСМЕТ.

## ĔÇ ТУМАСĂР СĔТЕЛ ХУШШИНЕ ЛАРМАСТĂП

***Ю.К.КИРИЛЛОВ, Мерешпуçĕнчен, уявра "Районăн хисеплĕ гражданинĕ" ята пачĕç:***

– Район 80 çул тултарнине 77 çул кĕтетĕп (Юрий Кириллович хăй 77 çулта – **Авт.**). Ват çынна ыр сунни, хисеплени калама та пĕлмелле мар савăнтарчĕ. Ватта хисеплекен хăй те хисеп курнă тенĕ евĕр пуçлăхсене хăйсене те хисеп пултăр. Паянхи уява район 80 çул малалла талпăнни çинчен сăвă çырса килтĕм. Таврапĕлӳçĕ ята та тавăрмалла. Хамăр тăрăхри ялсем пирки тĕпчесе "Тăван Ен" урлă çырса кăтартас ĕмĕтпе пурăнатăп. Хамăр ялти Çĕнтерӳ паркĕнче те ĕçлемелли нумай. Унта эпĕ кашни çулах чечексене ылмаштарса тăратăп. Парк яланах чечекре пултăр тесе тăрăшнă. Ирхине вăрансан ман мĕн те пулин ĕçлемелле. Ĕç тумасăр сĕтел хушшине лармастăп эпĕ. Ĕмĕчĕсем пур ман, çитменнине, пысăк. Вĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшăп.

## РАЙОН ПАЛĂРМАЛЛАХ УЛШĂНЧĔ

***А.В.АНДРЕЕВА, "Паха тĕрĕре" художник пулса ĕçлет, унăн тата Юлия Казакова çамрăкăн коллекцине уяври сцена çинче кăтартрĕç:***

– Уява эпир нумаййăн килнĕ, "Паха тĕрĕре" хатĕрлекен продукцин куравне йĕркелерĕмĕр. Çавăн пекех, хăвăрах куртăр пуль, картлашкасем çинче яшсемпе хĕрсем хăнасене пирĕн патăмăрта хатĕрленĕ чăваш кĕписемпе кĕтсе илчĕç. Сцена çине тухнă юрăçсен, пултарулăх ушкăнĕсен кĕписене те пирĕн патăмăрта çĕленĕ. Акă, китай сĕмĕллĕ костюмсене çак кунсенче вĕçлерĕмĕр çеç, паян вĕсемпе сцена çине тухса ачасем мĕнле хитре ташласа пачĕç. Чун мĕнле савăнмĕ?

Район чăнах та аталанать. Эпĕ Кӳкеçре 1977 çултанпа пурăнатăп. Палăрмаллах улшăнчĕ район, юлашки 4-5 çулта пушшех те. Çитес юбилее тата та пысăк кăтартусемпе кĕтсе илмелле пултăр.

А.АРДАЛИОНОВА интересленнĕ.

## ТАКĂР ÇУЛ ЯЛ ХАЛĂХНЕ САВĂНТАРАТЬ

«Тавах сире. Ял пуçне çеç мар, ял варринчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнисене асăнса лартнă палăк патне çитиех çул сарса патăр. Паллах, Анатолий Пантелеймонович, эсир тăрăшман пулнă пулсан, пире ку савăнăçлă куна курма пӳрмĕччĕ те», – савăнăçне пытараймасăр темиçе хутчен те тав сăмахĕ каларĕ Лапсар ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасра пурăнакан Ю.Антонова. Эрне кун кунта çул сарнă ятпа халăхпа район пуçлăхĕ А.Князев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ В.Мидуков, Шупашкарти протезпа ортопеди предприятийĕн директорĕ Ю.Ефиркин, Лапсар ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Е.Афанасьев тĕл пулчĕç.

Тĕрĕсех, ку ялта пурăнакансен чăннипех те район пуçлăхне тав тумалла, мĕншĕн тесен проектпа ял пуçне çити çеç çул пымалла пулнă. А.Князев тăрăшнипе, çине тăнипе асфальт ял варрине çитиех сарăнчĕ – Шупашкарти «Южный поселок» чарăнуран 800 метр таран. Çула тума 5 миллион тенке яхăн тухса кайнă. Унта В.Румянцев ертсе пыракан «Дорстрой» тулли мар яваплă общество ĕçченĕсем тăрăшнă, икĕ уйăхрах хута янă. Ялта 286 кил, пурĕ 944 çын пурăнать. Нумайăшĕ хулара ĕçлеççĕ. «Яла икĕ енчен кĕме пулать. Лапсар патĕнчен промзона урлă та çул пур, анчах эпир ăна «Южный поселок» чарăну патĕнчен ярас терĕмĕр», – терĕ Евгений Васильевич.

Пуçлăхсем килнĕ самантпа усă курса ял халăхĕ (шел, пурте ĕçлĕ, курăнать, вĕсем тĕл пулăва сахаллăн килнĕ) такăр çул çитнипе тав тунисĕр пуçне ытти ыйтусене те хускатрĕ. Хуравсем пурин кăмăлне те тивĕçтерчĕç.

А.АЛИНИНА.

## СĂТĂР МАР-И?

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче, 19 сехет иртсен, Тутаркасси ял тăрăхĕнчи 9 яла тата Çĕнĕ Шупашкарти 42269 хваттере çут çанталăк газĕ парса тăма пăрахнă: çынсем апат пĕçереймен, шыв ăшăтайман, ялсенче кăмака хутайман. Çĕр каçа газ кĕтсе илейменнипе хĕрарăмсем çӳлти-аялти сăмахсемпе упăшкисене çунтарма пуçланă, чĕтрене ернĕ арçынсем телефон кĕпçине яра-яра илнĕ, куçĕсене чарса пăрахса газ службине шăнкăравланă. Кăвак çулăм мĕншĕн чĕртĕнмен-ха?

Район прокурорĕн çумĕ А.П.Иванов пĕлтернĕ тăрăх, асăннă кун Тутаркасси тăрăхĕнче вырнаçнă газ пăрăхĕсене йӳплекен пункта паллă мар çынсем кĕнĕ, хулапа ялсене газ парса тăма чарса лартнă. Инкек сăлтавне палăртас, газ пама пуçлас тĕлĕшпе 3 кунта право йĕркине сыхлакан органсенчен тата газ службинчен 433 çын ĕçленĕ, ноябрĕн 15-мĕшĕнче, 15 сехет те 40 минутра, газ ялсене тата хулана çитнĕ, кăвак çулăм чĕртĕнсе кайнă, хĕрарăмсен кăмăлĕ тин аваланнă.

Хула прокуратурипе шалти ĕçсен пайĕ тата Шупашкар районĕн прокуратури халĕ пуç ватать: суйлав умĕн такам халăха тарăхтарас тĕллевпе ятарласа сăтăр тунă-ши е пунктри йӳпленĕвĕн пĕр-пĕр пайне сӳтсе илесшĕн пулнă-ши?

С.СЕРЕГИН.

## КĔР СĂРИ ĔÇНĔ

Йăршури клубра, ноябрĕн 11-мĕшĕнче. Сăрине кăçалхи хăмларан клуб заведующийĕ М.Григорьева хăех туса пынă. Ĕçмене чăваш халăхĕн кĕреке юррипе - "Акисухипе" – пуçланă, ял-йыша хĕл каçмалăх çăкăр-тăвар панăшăн вата çынсем хамăр Турăсене тав тунă, ваттисене асăннă. Ĕлĕк кĕр сăри ĕçнĕ ĕç ветеранĕсем О.Гаврилова, Р.Емельянова, Е.Петрова, Р.Осипова тата ыттисем клуб çумĕнчи "Чечек" ушкăн (илемлĕх ертӳçи – Н.Борисов) кĕреке тата улах юррисене шăрантарнине пĕрре хурланса, тепре савăнса итленĕ. Куççуль юхтарса ларакансем те пулнă теççĕ. Ĕлĕк хамăр йăла-йĕркене çирĕп тытса пурăннă та, ялта преступлени тăвакан та, усал-тĕсел те пачах пулман, хапха алăкне нихăçан та питĕрмен. Халь вăрă-хурах кĕресрен кун çуттипех алăк урлă сăлăп яратпăр, этеме хăратма пăру пысăкăш анчăк усратпăр. Анчах урăхла та пурăнма пулать. "Йăла-йĕркене тытсах пырасшăн-ха", – терĕ М.Григорьева заведующи.

Ю.МИХАЙЛОВ.

"ТӲРĔ КĂМĂЛЛĂ РАÇÇЕЙ"
"СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ"

*РФ ПАТШАЛĂХ ДУМИН ДЕПУТАЧĔН КАНДИДАЧĔ*

# ЧĂВАШ ЕН ÇĔНĔ ÇУЛ ÇИНЧЕ



## *АНАТОЛИЙ АКСАКОВ:*

**"ЯЛ ХУÇАЛĂХ ПРОИЗВОДСТВИНЕ АТАЛАНТАРАС, ПЕНСИСЕНЕ ӲСТЕРЕС, СОЦИАЛЛĂ ПУЛĂШУ ПАРАС ĔÇСЕНЕ ТАТСА ПАМА СТАБИЛИЗАЦИ ФОНДĔНЧЕН ТАТА НЕФТЬПЕ ГАЗ СУТНИН УКÇИ-ТЕНКИНЧЕН УСĂ КУРМАЛЛА".**

### ĔÇЛЕКЕН ÇЫН ЧУХĂН ПУЛМАЛЛА МАР!

Çапла кирлĕ:

- Ĕçшĕн тӳлессин шайне виççĕ хут ӳстермелле.
- Ĕç укçине тăтăшах индексацилесе тăмалла.
- Пенси ĕçленĕ вăхăтри ĕç укçин 65 процентĕнчен пĕчĕк пулмалла мар. Чи пĕчĕк пенсие 6 пин тенке çитермелле.
- Пенси калăпăшне ӳстерес тĕллевпе нефтьпе газа тата патшалăх харпăрлăхне сутнин тупăшĕсенчен "Аслă ăрусен фондне" туса хумалла.
- Пысăклатнă пенсие хальхи пек 80 çулта мар, 70-те пама пуçламалла.
- Стажа палăртнă чухне льготăллă тапхăра пăрахăçланине пĕтермелле: Инçет Çурçĕрте тата Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тылра ĕçленине пĕр çул вырăнне иккĕ, çапăçусене хутшăннисене пĕр çул вырăнне виççĕ тесе шутламалла.
- Кашни пенсионера çулталăкне пĕр хутчен кая мар сывлăхне тĕреклетме тата канма май туса памалла.
- Пур пенсионера та хула транспорчĕпе тӳлевсĕр çӳреме май туса памалла.

### ПРОИЗВОДСТВĂНА АТАЛАНТАРАССИ. ÇĔНĔРЕН ĔÇ ВЫРĂНĔСЕНЕ ТУСА ХУРАССИ.

Çапла кирлĕ:

- Химпромра тата республикăри электротехникăпа приборсем тăвакан предприятисенче производство хăвачĕсене модернизацилемелле, пысăк технологисене ĕçе кĕртмелле.
- Оборонăпа промышленность комплексне патшалăхăн хăйĕн çеç йĕркелесе пымалла.
- Саккунпа çирĕплетсе çакăн пек йĕрке туса хумалла: Чăваш Енри предприятисем хăш районта е хулара вырнаçнине кура налуксене хăйсем ĕçлекен вырăнти бюджетсене анчах тӳлемелле.
- Чăваш Енри çынсем пурăнакан вырăнсене пур çĕре те асфальт çулсем хумалла.

### КОРРУПЦИ – РАÇÇЕЙ КУН-ÇУЛНЕ ХĂРУШЛĂХА КĔРТСЕ ӲКЕРЕКЕН ПУЛĂМ.

Çапла кирлĕ:

- Взятка илнĕшĕн тата служба тивĕçĕсемпе сĕмсĕррĕн усă курнăшăн айăплассине вăйлатмалла.
- Бизнес ĕçне патшалăх служби ĕçĕсемпе пĕрле туса пырассине чармалла.
- Чиновниксемпе вĕсен çемйисен членĕсенчен çулсерен тупăш çинчен сведенисем илсе тăмалла.
- Взятка илнĕшĕн условнăй срок парса айăплас йĕркене пĕтерсе хумалла.

### ПУЯНСЕМПЕ ЧУХĂНСЕМ ХУШШИНЧИ ТАНМАРЛĂХА ПĔТЕРЕССИ – СОЦИАЛЛĂ ЗАДАЧА.

Çапла кирлĕ:

- Хаксем ӳснине чарса пымалла.
- Мулшăн пысăк налук тӳлеттермелле.
- Граждансен перекет кассисенче пĕтнĕ укçа-тенкĕне çĕнетессине патшалăхăн йăлтах хăй çине илсе пурнăçламалла.
- Бюджет системинче ĕçлекенсен – врачсен, учительсен, ученăйсен, культура работникĕсен – ĕç укçине ӳстермелле.
- Туса илнĕ тупăшшăн налук тӳлессине тивĕçлипе йĕркелемелле – уйăхне вунă пинрен сахалтарах тупăш илекенсен тӳлемелле мар.

### ÇУРТ-ЙĔР ЛАРТАС ПРОГРАММĂНА – ПУРНĂÇА.

Çапла кирлĕ:

- Çителĕксĕр пурăнакан граждансен çурт-йĕр проблемисене татса парас тĕллевпе "Справедливый дом" массăллă строительство программине ĕçе кĕртмелле.
- Строительствăн перекет кассине туса хумалла. Унта çурт-йĕр лартма кирлĕ укçан 25-30 процентне пухăнса пытăр. Ытти 70-75 процентне вăрах вăхăт тата пĕчĕк процентпа "5%" тӳлемелли кредит илсе саплаштарма майсем туса памалла.
- Пая кĕрсе çурт лартакансен прависене хӳтĕлемелле. Çурт-йĕр туса сутас ĕçре махинаци ан пултăр тесе патшалăхпа общественность енчен тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.
- Хуласенче çурт-йĕре таччăн лартассине чакарас тĕллевпе патшалăх нормисене туса хумалла.
- Коммерци тĕллевĕсене пурнăçлассишĕн çын пурăнакан çурт-йĕре ирĕксĕр пăсасси ан пултăр тесе мĕн кирлине пĕтĕмпех тумалла.

### ЯЛ ХУÇАЛĂХ АТАЛАНĂВНЕ ЭФФЕКТИВЛĂ МАЙСЕМПЕ ТУСА ПЫНИ ÇĔРШЫВА АПАТ-ÇИМĔÇПЕ ТИВĔÇТЕРЕССИНЕ ТАТСА ПАРАТЬ.

Çапла кирлĕ:

- Ял хуçалăхне çулсерен паянхинчен икĕ хут ытларах укçа-тенкĕпе тивĕçтермелле.
- Ял хуçалăх продукцине сутăн илмелли хаксене патшалăх енчен тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.
- Ялсенче çурт-йĕр лартакансене пулăшас тĕллевпе патшалăхăн мĕн пур расхутсен 50 процентне хăй çине илмелле.
- Ялсенче бюджет укçи çинче ĕçлекенсене коммуналлă çăмăллăхсем парассине малашне те пурнăçласа пымалла.
- Ялти шкулсене пĕтерсе тухнă çамрăксем аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренсе ял валли специальноçсем илччĕр тесе аслă шкулсенче квота туса хумалла.

**"Справедливая Россия - Тӳрĕ кăмăллă Раççей"**
партишĕн - списокри 8-мĕш номершĕн - сасăла!
**Тӳрĕ кăмăл! Саккунлăх! Çителĕклĕ пурнăç!**

Материала «РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккун тăрăх тӳлевсĕр йĕркепе пичетленĕ.










– Ăçта сан çĕнĕ курсу?
– Инçе-инçе тӳпере. Хăван вара ăçта?
– Хам та пĕлместĕп.
– Апла пулсан ма шантаран?
– Какшĕ, рейтинга ӳстермелле вĕт.

*«КАПКĂН» журнала çырăнăр. Индексĕ – 24608. Хакĕ 6 уйăха – 90 тенкĕ те 72 пус.*

Ял хуçалăхĕ

# ĔÇЛЕНИПЕ ПĔТМЕСТ ТЕХНИКА

## ТИВĔÇЛИПЕ УПРАМАСАН, ЧĂНАХ ТА, САМАЙ ЯПĂХАТЬ

***Техника ĕçленипе пĕтмест, ĕмĕрĕ унăн епле упранинчен нумай килет тесе пĕр инженер калани аса килчĕ. Чăнах та, управа ăна пур çĕрте те тивĕçлипе лартмаççĕ. Йĕркеллĕ çуса тасатманнине, консервацилемен-нине, кирлĕ пек выранçтарса лартманнине пулах хĕл каçипе мĕн чухлĕ тутăхмасть-ши, япăхмасть-ши вăл. Техникăна хĕл каçма епле лартнине тĕрĕслемелли смотр та иртсе кайрĕ. Çав вăхăтра комисси пур хуçалă-ха çитсе çаврăнчĕ, тивĕçлĕ асăрхаттару турĕ.***

Гостехнадзорăн район-ти пуçлăхĕ В.С.МИХАЙЛОВ калаǎ тăрăх, ял хуçалăх машинисене хĕл каçма лартас енĕпе смотр-конкур-са 24 хуçалăхран 18-шĕ хутшăннă. "Приволжское" учхозра, "Букет Чувашии" агрофирмăн Ишлейри фи-лиалĕнче ял хуçалăх маши-нисене ангарсене тата ас-фальт сарнă лаптăксене вырнаçтарнă. Уçă вырăна пулин те, Ленин ячĕллĕ тата Куйбышев ячĕллĕ ко-оперативсем те йĕркеллĕ лартса тухнă. "Ольдеевс-кая" агрофирмăра, "Слава" тата "Искра" кооператив-сенче кăлтăксем тупнă.

"Прогресс", Кадыков ячĕллĕ, "Чурачикское", "Дружба", "Шупашкар ка-йăк-кĕшĕк фабрики", "Свердлов ячĕллĕ хуçалăхсене комисси смотр-конкурса хутшăнтарас темен: терри-торийĕсем тимĕр-тă-мăрпа, тĕрлĕ тасамар-лăхпа тулнипе тата хĕле кая юлса хатĕр-леннипе. Хуçалăх ерт-ӳçисене çичĕ предпи-сани панă. Асăрхаттар-нисенчен те "Гвардеец" обществăпа "Атла-шевский" кооператив уйрăмах тимсĕр пулнă.

Пĕрремĕш вырăна "Приволжское" учхоз йышăннă, иккĕмĕшне – "Букет Чувашии" аг-рофирмăн Ишлейри филиалĕ. Виççĕмĕш вырăна никама та па-ман. Лайăх енчен ко-мисси Апашсемпе Чă-рăшкассисене (Куйбышев ячĕллĕ ЯХПК) па-лăртрĕ, начаррине "Пу-чах", "Гвардеец", "Туру-новский" предприятисе-не палăртнă.

В.ЭВЕРККИ.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*Ку сеялкăсемпе учхозсем халĕ усă курмаççĕ пулин те (акара вĕсен çĕнĕ йышсем), Кăрмăшсем тип-терлĕхе юратаççĕ.*

Суйлав

## ПАСПОРТ КИРЛĔ ПУЛСАН

Декабрĕн 2-мĕшĕнче паспортсемпе сасăлав участокне пырасси – Раççей гражданинĕн тивĕçĕ. Анчах та пурин те паспортсем çумра пур-и-ха? Çак енпе РФ Миграци служби Шу-пашкар районĕнчи уйрăмĕнче те ĕçлеççĕ. "Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, 20 çул тата 45 çул тултар-сан паспорта ылмаштармалла. Мăшăрлансан е уйрăлсан урăх хушамат улăштаракансем пур. Паянхи кун çак ыйтупа пирĕн патăмăрта нумай заявлени выртать. Хамăр енчен паспортсене пурне те суйлавчен хуçисем патне çитерме тăрăшатпăр. Кашни кунах графикпе ĕçлетпĕр. Кам паспорт улăштарма заявлени килсе çырнă – хатĕр документа декабрĕн 2-мĕшĕччен кил-се илмеллех. Сăмах май, суйлав кунĕ те ĕçлетпĕр эпир. Ыйтса пĕлмелли телефон но-мерĕ – 2-18-50", – терĕç миграци службин ра-йонти уйрăмĕнчен.

А.СУСМЕТ.

## В.ЧУРОВ ЗАЯВЛЕНИЙĔ

Декабрĕн 2-мĕшĕнче, РФ Патшалăх Думин суйлавĕ иртес кун, хăйĕн суйлав участокне çитсе сасăлайман, çав кун ялтан хулана е урăх çĕре кайма палăртнă суйлав правиллĕ кашни çыннăнах вырăна çитсенех кирек хăш суйлав участокĕнче те сасăлама пра-во пур. Çак ирĕкпе усă курас тесен Сирĕн декабрĕн 1-мĕшĕччен хăвăр пурăнакан çĕрти суйлав участокĕн комиссийĕнчен çирĕплетӳ (открепительное) удостоверенийĕ илсе каймалла.

Раççейри информацин йышлă хатĕрĕсем иртнĕ тунти кун РФ Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕн В.Чуровăн заявленине сарнă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Енĕн тата Пушкăртстанăн Тĕп суйлав комиссийĕсен (ТСК) ячĕпе асăннă регионсенче суя çыру-сем салатнă, вĕсенче "пĕр суйлавçăн та суйлава хутшăнмасăр юл-малла мар, сасăлава хутшăнмасан суйлавçăн явап тытма тивет" тесе палăртнă имĕш. В.Чуров право йĕркине сыхлакан органсенчен çак провокацие камсем йĕркеленине уçса пама ыйтнă. ЧР Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Л.Линик Шупашкарта ирттернĕ пресс-кон-ференцире ТСК ячĕпе тĕп хулара В.Чуров заявленийĕнче палăртнă пек суя çырусене право органĕсем те, ТСК та тупса палăртман тенĕ.

Ю.МИХАЙЛОВ.

Хыпарсем

## ÇĔНĔ ТĔЛЛЕВ

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче ЧР Патшалăх Канашĕн Председа-телĕн çумĕ В.Мидуков тата рай-он пуçлăхĕ А.Князев Хурăнлăх халăхĕпе тĕл пулнă, вĕсене рес-публикăра, районта тăвакан ырă ĕçсемпе паллаштарнă. Ялта çул тăвас ĕçе пуçласа янă Н.Смир-нова Хисеп хучĕ парса хавха-лантарнă, парне панă. Тĕл пу-лура çула вĕт чулпа çирĕплетсе асфальт сарасси çинчен те сă-мах тухнă. Район пулăшсан, тен, тĕллеве пурнăçлĕç те. Çынсем кашни килтен пĕрер пин тенкĕ пухассине хирĕç мар.

Пĕр кун маларах Сарапакас-си ял тăрăхĕн администрацийĕ çумĕнчи ветерансен хастарĕ-сем пухăннă, канаш председа-телĕн О.Димитриеван çумĕ пул-ма Сарапакассинчи Н.Трофимо-ва суйланă. Ветерансен ĕçĕшĕн яваплисем Пикшикре – Л.Масло-ва, Çатра-Хочехматра – Т.Андре-ева, Шорккара – Л.Майорова, Ко-лешшара – Н.Иванов.

Ю.ЮМАН.

## ПЫСĂК ХĂНАСЕМ ПУЛНĂ

Республикăна Раççейĕн граж-данла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен министрĕ ***С.Шойгу*** килсе кайнă, Атăлçи фе-дераци округĕн тата асăннă мини-стерство коллегийĕн пĕрлехи ла-рăвне ирттернĕ. Унта патшалăхăн халăха тата çĕршыва техногенлă хăрушлăхран, çут çанталăк инкекĕ-нчен тата терроризмран хӳтĕлесси-пе çыхăннă политикине сӳтсе явнă. Çакăн хыççăн С.Шойгу ЧПУ студен-чĕсемпе тĕл пулнă.

Тунти кун Шупашкарта Чулху-ла, Самар, Саратов облаçĕсенчи тата Чăваш Енри суд приставĕсем суд йышăнăвĕсене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе тухса тăракан çивĕч ыйтусене тишкернĕ. Семи-нара Европа Совечĕн тата Бело-руççи элчисем хутшăннă. Ăна Раççейри суд приставĕсен служ-бин ертӳçи ***Н.Винниченко*** ирт-тернĕ. Пысăк хăнана малтан ЧР Президенчĕ Н.Федоров йышăннă.

## РАЙПО ПУХУ ИРТТЕРЧĔ

Эрне кун Кӳкеç райповĕнче отчетпа суйлав пухăвĕ иртрĕ. Унта пуçтарăннă уполномоченнăйсем райповăн ĕç-хĕлне тишкерчĕç, малашлăх плансене па-лăртрĕç, сĕнӳсем пачĕç. Потребитель обществин ку çулхи тăхăр уйăхри тавар çаврăнăшĕ 79,2 миллион тенкĕлĕх пулнă, танлаштаруллă хаксемпе ӳсĕм - 23,2 процент.

Ĕç-хĕл пирки отчет тунă райпо ка-нашĕн председателĕ Н.И.Абанин паха продукцие кăна мар, лавккасем хăйсен сăн-сăпачĕпе тата сутуçсен тараватлă-хĕпе те илĕртмеллине палăртрĕ.

Пухăва хутшăннă район пуçлăхĕ А.П.Князев халăхран сĕт пуçтарассипе çине тăма чĕнсе каларĕ. Çитменнине, АПК аталанăвĕ çинчен калакан нацпро-ектпа сĕт сивĕтмелли тата ытти обору-довани çăмăллăхлă майпа илме пулать.

Пуху райпо канашĕн председателĕ пулма Н.И.Абанинах хăварчĕ.

Отчетпа суйлав пухăвне ЧР Патша-лăх Канашĕн Председателĕн çумĕ В.П.Мидуков хутшăнчĕ.

В.ТИТОВА.

## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

### Юбилей ячĕпе

**Хĕрлĕçыр ялĕнче пурăнакан пирĕн хак-лăран та хаклă атте – Михаил Леонтьевич ЛЕОНТЬЕВ ноябрĕн 20-мĕшĕнче 80 çул тултарать. Юратнă аттемĕре чĕре çумне ăшшăн ыталаса чуп тăватпăр, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх, нумай-нумай пурăнма вăрăм кун-çул сĕнетпĕр. Пире 5 ывăлне, 4 хĕрне аннепе пĕрле çуратса ӳстер-се, ура çине тăратса, çĕршыва кирлĕ çын ту-нăшăн тайма пуç сана тăван атте.**

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 18 мăнукĕ, 9 кĕçĕн мăнукĕ тата çывăх тăванĕсем.**


**ЕСТЬ ТАКАЯ ПРОФЕССИЯ - РОДИНУ ЗАЩИЩАТЬ!**

ПРОЯВИТЬ СЕБЯ НА ВОЕННОМ ПОПРИЩЕ.

**ЗАКЛЮЧАЙТЕ КОНТРАКТ**

О ПРОХОЖДЕНИИ ВОЕННОЙ СЛУЖБЫ:

**15 ОМСБР МС** – п. Рощинский в 30 км от г.Самары. **27 мотострелковая дивизия** – п. Кряж Самарской обл. **34 мсд** – г.Екатеринбург; **385 артбригада** – п.Звездный Пермской обл.; **31 ОДШБР** – г. Ульяновск; **201 военная база** – Республика Таджикистан, пограничные войска ФСБ РФ; **ВМФ; 42 МСД** – н.п. Хангкала и другие направления. Срок контракта – 3 года. Государство предоставляет достойный пакет социальных услуг и гарантий. Высокая зарплата, обеспечение жильем, стаж 1 год за 1,5 (2 и 3 в зависимости от места службы). **Возможность в 40 лет и раньше выйти на пенсию.**

**Обращайтесь в военный комиссариат Чебоксарского и Мариинско-Посадского районов: *п. Кугеси, кабинет №22, телефон: 2-10-69.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,1351 га с кадастровым номером 21:21:27 07 02:0024, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Кивсерт-Марги, ул. Лесная (земли населенных пунктов) для огородничества.

Адрес: ***пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.:(8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,1008 га с кадастровым номером 21:21:12 02 06:0159, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Яуши, ул. Восточная (земли населенных пунктов) для огородничества.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Собственник** земельной доли СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского района Шипатова А.А. сообщает о выделении земельной доли 2,15 га, расположенного в 590 м южнее железной дороги № 51 по ул.Зеленая д.Устакасы. Возражения направить по адресу: ***Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

***Куплю дом или земельный участок. Т.: 89176546751.***

***Закупаем скот КРС и лошадей по договорной цене. Тел.: 67-56-06, с.:8-902-327-56-06.***

**Поправка.** В райгазете «Тăван Ен» №№ 33-34 от 31 марта 2007г. в объявлении о предоставлении земельного участка вместо «(земли сельскохозяйственного назначения)» следует читать «(земли населенных пунктов)».


✻ ✻ ✻

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование врачу общей практики Атлашевской участковой больницы МУЗ «Чебоксарская ЦРБ» Яковлевой Раисе Анатольевне в связи со смертью матери

**Клары Максимовны СЕМЕНОВОЙ.**


ТĂВАН ЕН («КРАЙ РОДНОЙ») Чебоксарская районная газета

Учредители: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, РГУ " Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен",

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.А.СУСМЕТОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 20.11.2007 г. в 16 час. 00 мин. Тираж 2130. Заказ № Индекс газеты - 54820.